27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ФЕВРАЛЬ
3
ШАМАТКУН
21(6772) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Тырӑ хатӗрлес ӗҫ—фронтри пек ӗҫ

Паян «Правда» хаҫат тырӑ хатӗрлемелли государство планне ӑнӑҫлӑн тултарнӑшӑн районсен тата облаҫсен совет па партии работникӗсене наградӑласси ҫинчен СССР Верховный Совет Президиумӗ кӑларнӑ Указсене пичетлеме пуҫлать. «Тырӑ хатӗрлес ӗҫ—вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тӑшмана ҫӗнтерес тӗлӗшпе уйрӑмах кирлӗ ӗҫ пулса тӑрать, ҫак енчен вӑл фронтри ӗҫпе танлашать», тесе шутласа, правительство темиҫе облаҫӑн партипе совет работникӗсене Совет Союзӗн фронтри чаплӑ ӗҫсемшӗн паракан орденӗсемпе—I-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗпе тата II-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗпе наградӑланӑ. Наградӑланнисем хушшинче—парти райкомӗсен секретарӗсем, ӗҫсыннин депутачӗсен район Совечӗсен исполкомӗсен председателӗсем, Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн районсенчи уполномоченнӑйӗсем, парти обкомӗсен секретарӗсем, ӗҫсыннин депутачӗсен область Совечӗсен исполкомӗсен председателӗсем, Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн облаҫсенчи уполномоченнӑйӗсем.

Совет тата парти работникӗсем ҫав пысӑк наградӑна паттӑр совет воинӗсем фашистла тискер кайӑка хӑйӗн шӑтӑкӗнчех вӗлермелле пыра-пыра ҫапнӑ вӑхӑтра илеҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫав аслӑ та чаплӑ наступленине пӗтӗм тӗнче тимлӗн сӑнаса тӑрать. Хӗрлӗ Ҫарӑн хӑвачӗ, вӑл тӑшмана ҫӗнтерме тӑрӑшни, унӑн командирӗсен ӑсталӑхӗ, унӑн воинӗсен хастарлӑхӗ нихӑҫан-хинчен те пысӑк. Вӑйлӑ та чее тӑшманпа темиҫе ҫул хушши хаярран ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, вӑйсӑрланас вырӑнне пӗр чарӑнмасӑр вӑйланса пырса, тӑшмана вӑйлӑрах та вӑйлӑрах пыра-пыра ҫапакан ҫавӑн пек ҫар историре урӑх пулман.

Хӗрлӗ Ҫарӑн иксӗлми улӑпла вӑйӗ ялан ӳссе пыни мӗнрен килет-ха? Аҫта унӑн ҫӑлкуҫӗ?

Вӑл Октябрьти революци туса хунӑ социализмлӑ стройра, хӑйӗн Тӑван ҫӗршывне хӳтӗлес аслӑ шухӑшпа хавхаланнӑ халӑхӑн чӗрӗ вӑй парса тӑракан совет патриотизмӗнче. «Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑйне,—тенӗ Сталин юлташ,—совет тылӗ йӗркеллӗ ӗҫлени нумай хут ӳстерсе ярать. Рабочисем, колхозниксем, интеллигенци хӑйсен Тӑван ҫӗршывӗ умӗнчи тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене паттӑррӑн ҫӗнтерсе пыраҫҫӗ, Хӗрлӗ Ҫара хӗҫпӑшал, боеприпас тата апат-ҫимӗҫ пӗр чарӑнмасӑр парса тӑраҫҫӗ».

Пӗтӗм совет ҫӗршывӗ, ҫав ҫӗршывра пурӑнакан мӗнпур халӑхсем Ленин—Сталин партийӗ тавра тата совет правительстви тавра пӗтӗҫнӗ, пӗрлӗхлӗ боевой лагере пӗрлешнӗ, ҫав лагерь пирӗн ҫарпа тата флотпа пӗрле хӑйӗн Тӑван ҫӗршывӗн чыслӑхӗпе ирӗклӗхӗшӗн, ӑна ирӗке кӑларассишӗн, нимӗҫ ҫарӗсене аркатса тӑкассишӗн аслӑ вӑрҫӑ вӑрҫать. Пирӗн паттӑр рабочи класс фронта танксем, тупӑсем, самолетсем, минометсем, пулеметсем, винтовкӑсем тата боеприпассем ытларах та ытларах парса тӑрать.

Совет халӑхӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн хӗҫпӑшалне кунсерен лайӑхлатса пырать, мӗншӗн тесен ҫар вӑл хальхи вӑхӑтри хӗҫпӑшалсӑр ҫапӑҫма тата ҫӗнтерме пултараймасть. «Анчах вӑл ҫавӑн пекех тата тырӑсӑр, апат-ҫимӗҫсӗр те ҫапӑҫма, ҫӗнтерме пултараймасть» (И. Сталин). Тырӑ вӑл—тӑшманпа кӗрешес ӗҫре ҫав тери кирлӗ хӗҫпӑшал пулса тӑрать. Ҫӗршывра тырӑ мӗн чухлӗ ытларах, Хӗрлӗ Ҫара тата Хӗрлӗ Ҫар валли ӗҫлесе тӑракан рабочисене апат-ҫимӗҫ мӗн чухлӗ лайӑхрах парса тӑратпӑр, тӑшмана ҫӗнтересси те ҫавӑн чухлех ҫывӑх пулать. Тырӑ ытларах туса тӑрса, ытларах парса тӑрассишӗн кӗрешесси—нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан Отечественнӑй вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчен пуҫласах пирӗн пӗтӗм совет халӑхӗн, чи малтан пирӗн чаплӑ колхоз хресченӗсен, вӑрҫӑпа хуҫалӑх тӗлӗшпе тумалли чи кирлӗ задачисенчен пӗри пулса тӑчӗ.

Апат-ҫимӗҫ ыйтӑвне татса панӑ чухне пирӗн ҫӗршывӑн мӗн тери пысӑк йывӑрлӑхсене ҫӗнтермелле пулнине пӗчӗклетсе кӑтартма кирлӗ мар. Украинӑн, Донӑн тата Кубанӗн ялхуҫалӑх тӗлӗшӗнчен питӗ паха районӗсене гитлерла вӑрӑ-хурахсем вӑрҫӑн малтанхи тапхӑрӗнчех оккупацилерӗҫ, вӗсене калама ҫук вӑйлӑ тустарчӗҫ. Выҫлӑх совет халӑхне пӑвса ӳкерӗ, тесе шухӑшланӑ тӑшман. Анчах колхозсене пӗрлешнӗ совет хресченӗсем, хӑйсен тӑван государстви пулӑшнипе, хӑйсем умне тухса тӑнӑ пысӑк задачӑсене ҫав йывӑр кунсенче те пурнӑҫлама пултарчӗҫ, вӑрҫӑ кӑларса тӑратнӑ йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме пултарчӗҫ, Хӗрлӗ Ҫарпа хамӑр халӑха апат-ҫимӗҫ, промышленноҫа ҫӗртавар парса тӑма пултарчӗҫ. Ҫав калама ҫук пысӑк йывӑрлӑхсем колхозлӑ хресченсен хӑйсен юратнӑ Тӑван ҫӗршывӗ валли ӗҫлесе тӑрас кӑмӑлне хуҫаймарӗҫ, унӑн ҫав кӑмӑлне тата ытларах ҫирӗплетрӗҫ. Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирӗн хресченсем мӗн тери хастарлӑн ӗҫленине пирӗн пулас ӑрусем нихӑҫан та манмӗҫ. Хирсемпе фермӑсенчи ӗҫсен чи пысӑк пайне туса пурӑннӑ колхозницӑсемпе колхоз ҫамрӑкӗсен ҫав тери чаплӑ ӗҫӗсем историе ӗмӗрлӗхех кӗрсе юлӗҫ.

Анчах та колхоз стройӗн вӑй-хӑвачӗ, совет хресченӗсен патриотизмӗ халиччен нихӑҫан та 1944 ҫулхи пек вӑйлӑ палӑрманччӗ-ха, нихӑҫан та 1944 ҫулхи пек пысӑк результатсем паманччӗ-ха. Совет хресченӗсен ӗҫӗ сая каймарӗ. Тӑшман вӑхӑтлӑха оккупациленӗ районсем, тырӑ лайӑх пулакан ҫав районсем, каллех хамӑр ҫӗршыв аллине кӗнӗ хыҫҫӑн пирӗн ялхуҫалӑхӗ хӑвӑрт юсанса пырать. Ҫулталӑк хушшинче пӗтӗм ялхуҫалӑх производстви продукцийӗ палӑрмаллах ӳсрӗ. «Колхоз хресченӗсем тӑрӑшнине пула, Хӗрлӗ Ҫар вӑрҫӑн тӑватӑмӗш ҫулӗнче те апат-ҫимӗҫ ҫитменнипе аптӑрамасть. Колхозниксемпе колхозницӑсем рабочисемпе интеллигенципе апат-ҫимӗҫ, промышленноҫа ҫӗртавар парса тӑраҫҫӗ, фронт валли хӗҫпӑшалпа ҫар хатӗрӗсем туса тӑракан заводсемпе фабрикӑсене йӗркеллӗ ӗҫлесе тӑма май параҫҫӗ. Пирӗн колхоз хресченӗсем, хӑйсен Тӑван ҫӗршывӗ умӗнчи тивӗҫне лайӑх ӑнланса илсе, тӑшмана ҫӗнтерме Хӗрлӗ Ҫара хастарлӑн пулӑшаҫҫӗ» (И. Сталин).

Темиҫе вунӑ пин колхоз, районсем, облаҫсем тата республикӑсем планран иртерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне темиҫе миллион пӑт тырӑ хыврӗҫ. Государствӑна тырӑ памалли плана Украина ССР-ӗ пек, Ростов, Горький, Тула облаҫӗсем пек иртерсе тултарнӑ республикӑсемпе облаҫсем пирӗн ҫӗршывра нумай. Совет государстви апат-ҫимӗҫ ҫителӗклӗ, ҫав запас ӑна, ыранхи куншӑн хӑрамасӑр, тӑшмана ҫӗнтеричченех ҫапӑҫма май парать.

Вӑрҫӑ тени вӑл ялхуҫалӑхне кирек хӑҫан та калама ҫук хытӑ юхӑнтарнӑ. Тӗнчери пӗрремӗш вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче те ҫавӑн пекех пулчӗ. Вак тата вӑйсӑр уйрӑм хресчен хуҫалӑхӗсем, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи хӗнхурсене хирӗҫ тӑма пултарайман тата государство пулӑшман вак хресчен хуҫалӑхӗсем пулнӑ вӑхӑтра урӑхла пулма та пултарайман. Хальхи вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирӗн ҫӗршыври ялхуҫалӑхӗ арканса пымасть, каялла чакмасть; вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, вӑл хамӑр ҫӗршывпа ҫара апат-ҫимӗҫ ҫителӗклӗ парса тӑрать.

Парти, совет тата хатӗрлев работникӗсене наградӑлани социализмлӑ ялхуҫалӑхӗн ӳссе пыракан хӑватне тата колхоз хресченӗсен патриотизмне питӗ лайӑх кӑтартса парать. Вӑл тата тылри партипе совет организацийӗсен вӑйӗпе пултарулӑхӗ ӳснине, государствӑн чи кирлӗ заданийӗсене пурнӑҫламашкӑн массӑсене пӗтӗҫтерме тата мобилизацилеме пултарнине кӑтартса парать. «Мӗн пурӗ фронт валли!» тенӗ лозунгпа ӗҫлесе, вӗсем социализмлӑ ялхуҫалӑхӗн калама ҫук пысӑк вӑйне хускатса ячӗҫ, ялхуҫалӑхне колхозла организациленине пула тупӑннӑ питӗ йышлӑ майсемпе пӗлсе усӑ курчӗҫ, колхоз стройӗн мӗнпур вӑйӗсемпе майӗсене тӑшмана аркатса тӑкас ӗҫе ячӗҫ. Вӗсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисенче совет ҫыннисем мӗнле ӗҫлеме пултарнине тата вӗсем мӗнле ӗҫлемеллине кӑтартса пачӗҫ. Тырӑшӑн кӗрешес ӗҫ малалла пырать. Тырӑ хатӗрлемелли плана тултарасси колхозсен чи малтанхи задачи пулса тӑрать, вӑл ӗлӗк те ҫапла пулнӑ, халӗ ҫапла, малашне те ҫаплах пулӗ. Тырӑ памалли плана тултарайман вырӑнсенче ӑна тултарасси—халех тумалли задача пулса тӑрать.

Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах ҫуракине кӑтартуллӑн хатӗрленмелле. Ялсенчи партипе совет работникӗсен задачи—ҫуракине лайӑх хатӗрлесе, ӑна ӑнӑҫлӑн ирттерес ӗҫе колхозлӑ ялӑн мӗнпур вӑйне мобилизацилесси пулса тӑрать. Государствӑна тырӑ памалли обязательствӑна вӑхӑтра тата пӗтӗмпех пурнӑҫласси мӗн тери паха ӗҫ пулса тӑнине ялти ӗҫсыннисене хаҫатсенче те, радиопа та, докладсемпе лекцисенче те пӗр чарӑнмасӑр ӑнлантарса тӑмалла. Тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене вӑхӑтра тата лайӑх юсаса хурасси, акма лайӑх вӑрлӑх хатӗрлесе хурасси, удобренисем хатӗрлесе хире турттарса тухасси, юр тытасси, ҫурхи шыва тытса юласси, ӗҫ выльӑхне ӗҫе тухма хатӗрлесси, горючи илсе килесси, кадрсене вӗрентесси—ҫаксем вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешес ӗҫре колхозсемпе совхозсем тата МТС-сем умӗнче тӑракан чи кирлӗ задачӑсем пулса тӑнине лайӑх ӑнлантарса памалла. Вӑйлӑ тырпул туса илессине тата ҫарпа ҫӗршыва тырӑпа апат-ҫимӗҫ, промышленноҫа ҫӗртавар ҫителӗклӗ парса тӑрассине ӑна хальхи вӑхӑтрах, ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттерме кирлӗ условисем туса хунӑ вӑхӑтрах татса параҫҫӗ.

Тырӑ хатӗрлемелли плана ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланӑшӑн наградӑлани ҫинчен калакан хыпара ялта та, хулара та, фронтра та питӗ савӑнса кӗтсе илӗҫ. Боевой орденсем илнӗ работниксене пысӑк награда илнӗшӗн пур совет ҫыннисем те хӗрӳллӗн саламлӗҫ. Анчах та ҫакна манма юрамасть: совет ҫӗршывӗнче паракан награда вӑл хисеплӗ паллӑ ҫеҫ мар, вӑл обязательство та пулса тӑрать, вӑл ҫитӗнӳ хыҫҫӑн ҫитӗнӳ туса пыма чӗнсе тӑрать.

Эпир Хӗрлӗ Ҫар питӗ вӑйлӑ наступлени туса пынӑ вӑхӑтра пурӑнса ӗҫлетпӗр. Эпир пӗтӗмпех, татӑклӑнах ҫӗнтересси инҫе юлмарӗ ӗнтӗ. Тӑшмана часрах ҫӗнтермешкӗн колхоз хресченӗсем хӑйсен юратнӑ Тӑван ҫӗршывӗ умӗнчи тивӗҫне вӗҫне ҫитиччен пурнӑҫлӗҫ.

(«Правда», февралӗн 2-мӗшӗнчи умстатьи).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 1-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 1-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Хӗвелтухӑҫ Пруссире ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, ЗЕЕБУРГ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла ҫапӑҫса туртса илнӗ, вӑл шутра—ДРУГЕНЕН, КОМУНЕН, ПОЕРШИТТЕН, ПОНАКЕН, ШУДИТТЕН (КЕНИГСБЕРГ хулинчен 17 километр ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре), КНАУТЕН, РОГГЕНХАУЗЕН, ТОЛНИГК, ЗИГФРИДОВАЛЬДЕ, ЛЕКИТТЕН, ФЛЕМИНГ, ЭШЕНАУ, ГЛОТТАУ ятлӑ пысӑк ялсем.

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, хупӑрласа илнӗ тӑшман группировки хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, февралӗн 1-мӗшӗнче ТОРУНЬ (ТОРН) хулипе крепоҫне—ҫулйӗрсен паха узелне тата нимӗҫсен ВИСЛА шывӗ ҫинчи оборонин хӑватлӑн тӗреклетнӗ пунктне—штурмласа туртса илнӗ.

ШНАЙДЕМЮЛЬ хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. РАТЦЕБУР хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, ЦИННОВ, БРИЗЕНИТЦ, ЦАМБОРСТ, ВИССУЛЬКЕ, ЛЕБЕНКЕ, ШПРИНГБЕРГ ялӗсене йышӑннӑ.

Пирӗн ҫарсем тӑшманӑн ШНАЙДЕМЮЛЬ хулинчи гарнизонне хупӑрласа илнӗ те ӑна пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ.

ОДЕР ҫинчи ФРАНКФУРТ хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ШВЕРИН хулипе чугун ҫул узелне ҫапӑҫса туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата Бранденбург провинцийӗнче халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ЛИБЕНОВ, ДЮРИНГСХОФ, ХАММЕР, КЕНИГСВАЛЬДЕ, ЛАЙССЕН, ЗЕЕРЕН, ЛАВОВ, МЮЛЬБОК, ГРИЗЕЛЬ, ЛАЙТЕРСДОРФ ятлӑ пысӑк ялсем.

ПОЗНАНЬ районӗнче пирӗн ҫарсем хупӑрласа илнӗ тӑшман чаҫӗсене пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ.

ЛЕШНО (ЛИССА) хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем Германи чикки урлӑ каҫса кайнӑ та Германи ҫӗрӗнче ШЛЕЗИРЗЕ тата ФРАУШТАДТ хулисене ҫапӑҫса туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ШУССЕНЦЕ, ШЕНАБЕ, МЕРЦДОРА, ЛАНГЕМАРК, КУРСДОРФ, ШЛИХТИНЗАЙМ ятлӑ пысӑк ялсем.

БУДАПЕШТРА пирӗн ҫарсем хулан хӗвеланӑҫ пайӗнче (БУДАРА) хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ, темиҫе квартал тытса илнӗ.

Январӗн 31-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 195 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 26 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Хӗвелтухӑҫ Пруссире пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Пӗр соединени Кенигсберг хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре кӗрешекен чаҫӗсем Мюлен-Флис шывӗ урлӑ каҫнӑ та халӑх пурӑнакан чылай пункта тытса илнӗ, халӗ тӑшманпа Данциг бухти хӗрринчен 12 километрта ҫапӑҫаҫҫӗ. Вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ Зеебург хулишӗн хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Тӑшман малтанах хатӗрлесе хунӑ позицисемпе усӑ курса, хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Совет пехотинецӗсемпе танкисчӗсем нимӗҫсен оборонин тӑрӑхне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та Зеебург хулине тытса илнӗ. Кун каҫиччен темиҫе пин гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен 40 танкне ытла персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Трофейсем тытса илнӗ, вӑл шутра—25 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ, 40 хир туппи, 6 паровоз тата ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 150 вагон. 2.000 нимӗҫе ытла тыткӑна илнӗ.

Алленштайн хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем хӗвеланӑҫ еннелле тухма хӑтланнӑ нимӗҫ атакисене ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ, тӑшмана йывӑр сухатусем кӳнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче гитлеровецсен виллисем тулликех выртаҫҫӗ, ҫӗмӗрсе тӑкнӑ техникӑпа тӑшман хӗҫпӑшалӗ нумай тӑрса юлнӗ.

* * *

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсем паян Торунь (Торн) хулипе крепоҫне штурмласа туртса илнӗ. Торунь патне пымалли вырӑнсене 12 форт хӳтӗлесе тӑнӑ, кашни фортӑн бетонран тунӑ виҫӗ метр тӑршшӗ стенасем пулнӑ. Фортсем умӗнче хирти пек укрепленисен тӑрӑхӗ выртнӑ, унта пралук картисем, танксене чарма алтнӑ канавсем тата минӑсем лартса тултарнӑ сарлака вырӑнсем пулнӑ. Крепоҫе ятарласа вӗрентсе хатӗрленӗ крепость батальонӗсем тата тӑшманӑн ытти чаҫӗсем те хӳтӗлесе тӑнӑ, вӗсен артиллери нумай пулнӑ. Гитлер командованийӗ крепость гарнизонне, юлашки ҫын пӗтиччен ҫапӑҫма хушса, питӗ ҫирӗп приказ панӑ. Эсэсовецсен ятарласа тунӑ ушкӑнӗсем тыткӑна парӑнма хӑтланнӑ салтаксене вырӑнтах пере-пере пӑрахнӑ. Пирӗн ҫарсем, виҫӗ енчен вӑйлӑн пырса ҫапса, тӑшманӑн хирти укреплениӗсене татнӑ, тӑшман пехотин икӗ полкне пӗтерсе тӑкнӑ. Хулана пырса кӗмелли вырӑнсенче хытӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн совет чаҫӗсем, артиллери персе пулӑшса тӑнипе, крепоҫе штурмлама тытӑннӑ. Гитлеровецсем питӗ хытӑ хирӗҫ тӑнӑ, анчах та пирӗн ҫарсем хӗссе пынипе чарса лартма пултарайман. Крепость форчӗсем пӗрин хыҫҫӑн тепри парӑнса пынӑ. Советсен штурмлакан отрячӗсем ҫав тери хӑвӑрт малалла кайнӑ та тӑшман гарнизонне темиҫе пая уйӑрса янӑ. Тӑшман пехотин пӗр ушкӑнӗ хуларан ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ еннелле татса тухма хӑтланнӑ. Пирӗн ҫарсем нимӗҫсене пур енчен те атакӑланӑ. Кӗске вӑхӑт хушши пынӑ ҫапӑҫура нимӗҫсен пӗр полк ҫурра яхӑн пехотӑран тӑракан колоннине аркатса тӑкнӑ. Гитлеровецсене ҫурри ытла пӗтерсе тӑкнӑ, ыттисем тыткӑна парӑннӑ.

* * *

Одер ҫинчи Франкфурт хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Хаярран ҫапӑҫса, совет чаҫӗсем Шверин хулине туртса илнӗ. Ку хула нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗ пулнӑ, вӑл Обра шывӗ суднӑсем ҫӳрекен Варта шывне юхса кӗнӗ вырӑнта ларать. Пирӗн ытти чаҫсем, хӑйсен ҫулӗ ҫинчи тӑшман ҫарӗсене пӗтерсе пырса, 20 километр малалла кайнӑ. Вӗсем Одер ҫинчи Франкфурт хулинчен 50 километрта ларакан Лагоз ялне туртса илнӗ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, пирӗн ҫарсем кун каҫиччен 3.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, 1.617 гитлеровеца тыткӑна илнӗ. Нимӗҫсенчен трофейсем нумай тытса илнӗ, вӑл шутра—247 тупӑ тата 150 бронетранспортер.

* * *

Лешно (Лисса) хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, Польшӑпа Германи чикки урлӑ каҫнӑ та Германи ҫӗрне 20 километр кӗрсе кайнӑ. Совет чаҫӗсем нимӗҫсен Шлезирзе тата Фрауштадт хулисене—тӑшман оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ пункчӗсене—туртса илнӗ. Ҫавӑн пекех тата Одер шывӗ патӗнчи Шлихтингсхайм чугун ҫул станцине йышӑннӑ. Юлашки кунсенче пирӗн ҫарсем Лешно хули районӗнчи вӑрмансенче нимӗҫсен икӗ группировкине аркатса тӑкнӑ. Икӗ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче тӑшманӑн темиҫе пин салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, 2.800 нимӗҫе тыткӑна илнӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Нумай ачаллӑ амӑшӗсене „Ача амӑшӗн мухтавӗ" ятлӑ орденсемпе тата „Ача амӑшӗсен медалӗ" ятлӑ медальсемпе наградӑласси ҫинчен

СССР Верховный Совет Президиумӗ 1944 ҫулхи августӑн 18-мӗшӗнче йышӑннӑ Указ тӑрӑх, СССР Верховный Совет Президиумӗ ячӗпе ҫаксене наградӑлас:

УЛАТӐР РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

Тӑхӑр ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене

«АЧА АМАШЕН МУХТАВӖ» ЯТЛА I-МӖШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Анна Константиновна Вавилкинӑна—Алтышево ял Советӗнчи «Заря» колхоз колхозницине.
2. Пелагея Андреевна Душевӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
3. Прасковья Васильевна Зеленовӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
4. Александра Ивановна Кизяинӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
5. Домна Гурьяновна Серебряковӑна—Явлей ял Советӗнчи ялпо работницине.
6. Матрена Семеновна Сидоровӑна—Явлей ялӗнчи килхуҫи хӗрарӑмне.

Сакӑр ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене

«АЧА АМАШЕН МУХТАВӖ» ЯТЛА II-МӖШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Пелагея Ильинична Акимовӑна—Ҫӗнӗ Эйпеҫ ял Советӗнчи «Правда» колхоз колхозницине.
2. Анна Николаевна Брейкинӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
3. Анастасия Яковлевна Ваничкинӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
4. Варвара Ивановна Костышевӑна—Засурско-Безднински ял Советӗнчи «Красное знамя» колхоз колхозницине.
5. Елена Кирилловна Мадуровӑна—Ҫӗнӗ Эйпеҫ вӑрманпунктӗнчи служащине.
6. Клавдия Ивановна Охримовӑна—Ҫӗнӗ Эйпеҫри ялпо служащине.
7. Мария Васильевна Пудовӑна—Ҫӗнӗ Эйпеҫ вӑрман пунктӗнчи работницӑна.
8. Раиса Николаевна Тельцовӑна—Ҫӗнӗ Эйпеҫ ял Советӗнчи «Правда» колхоз колхозницине.
9. Анна Григорьевна Фадеевӑна—Явлей ял Советӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
10. Прасковья Васильевна Шмелевӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
11. Анна Семеновна Шугуровӑна—Иваньково-Ленински ял Советӗнчи «Красный луч» колхоз колхозницине.

Ҫиччӗ ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене

«АЧА АМАШЕН МУХТАВӖ» ЯТЛА III-МӖШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Анна Матвеевна Белоглазовӑна—Иваньково-Ленински ял Советӗнчи «Красный луч» колхоз колхозницине.
2. Пелагея Михайловна Ереминӑна—Засурско-Безднински ял Советӗнчи «Красное Анютино» колхоз колхозницине.
3. Евдокия Дмитриевна Колесниковӑна—Иваньково-Ленински ял Советӗнчи «Красный луч» колхоз колхозницине.
4. Прасковья Ивановна Моисеевӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
5. Елена Петровна Новиковӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
6. Матрена Яковлевна Птичновӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
7. Христина Трофимовна Сандальниковӑна—Алтышево ял Советӗнчи «Заря» колхоз колхозницине.

Улттӑ ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене

«АЧА АМАШЕСЕН МЕДАЛӖ» ЯТЛА I-МӖШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Евдокия Алексеевна Акимовӑна—Ҫӗнӗ Эйпеҫри служащине.
2. Агриппина Федоровна Балясниковӑна—Алтышево ял Советӗнчи «Заря» колхоз колхозницине.
3. Анастасия Николаевна Белавинӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
4. Анна Алексеевна Белянкинӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
5. Мария Григорьевна Ваткинӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
6. Серафима Филипповна Карповӑна—Засурско-Безднински ял Советӗнчи Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
7. Татьяна Ивановна Новиковӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
8. Анна Андреевна Панковӑна—Иваньково-Ленински ял Советӗнчи «Красный луч» колхоз колхозницине.
9. Мария Александровна Тараненкӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
10. Анна Васильевна Тельцовӑна—Ҫӗнӗ Эйпеҫ ял Советӗнчи «Правда» колхоз колхозницине.
11. Александра Петровна Федоровӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
12. Елизавета Алексеевна Шугуровӑна—Иваньково-Ленински ял Советӗнчи «Красный луч» колхоз колхозницине.

Пилӗк ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене

«АЧА АМАШЕСЕН МЕДАЛӖ» ЯТЛА II-МӖШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Ирина Макаровна Банниковӑна—Явлей ял Советӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
2. Анна Ивановна Грабовӑна—Стемас ял Советӗнчи колхоз колхозницине.
3. Александра Васильевна Михеевӑна—Засурско-Безднински ял Советӗнчи «Красный Бор» колхоз колхозницине.
4. Татьяна Александровна Нестеровӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
5. Анастасия Александровна Рузавинӑна—Засурско-Безднински ял Советӗнчи «Красная Звезда» колхоз колхозницине.
6. Матрена Ивановна Рузавинӑна—Засурско-Безднински ял Советӗнчи Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
7. Стефанида Петровна Серовӑна—Явлей ял Советӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
8. Варвара Григорьевна Сустриковӑна—Явлей ял Советӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
9. Мария Дмитриевна Тухлинана—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
10. Мария Прокофьевна Шишковӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
11. Пелагея Петровна Юркинӑна—Стемас ял Советӗнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.
Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 ҫулхи январӗн 30-мӗшӗ.

Налог парӑмӗсене пӗтӗмпех пухса ҫитермелле

Финанс органӗсен ӗҫне вӗсем налогсене тӗрӗс шута илсе хуни, налог укҫине срокра тата пӗтӗмпех пухса пани тӑрӑх хаклаҫҫӗ. Хуласемпе районсенчи финанс органӗсен чылай работникӗсем, халӑх хушшинче массӑллӑ-ӑнлантару ӗҫне анлӑн туса пырса, налогсене йӗркеллӗ тӳлемеллисем тӗлӗшпе законлӑ майсемпе усӑ курса, государство налогӗсемпе вырӑнти налогсен укҫисене вӑхӑтра пухса пыраҫҫӗ.

Октябрьски, Сӗнтӗрвӑрри, Ҫӗрпӳ, Вӑрмар, Шӑхасан, Тӑвай, Чурачӑк, Элӗк тата ытти районсен финанс отделӗсем налог парӑмӗсене пӗтӗмпе тенӗ пекех пухса ҫитерчӗҫ. Асӑннӑ районсенчи финанс отделӗсен агенчӗсемпе инспекторӗсем, ҫавӑн пекех отдел заведующийӗсем хӑйсем те, налог енӗпе парӑмлӑ кашни ҫынна пӗлсе тӑраҫҫӗ, вӗсемпе калаҫаҫҫӗ, мӗншӗн парӑма кӗнин сӑлтавӗсене тӗпчесе пӗлеҫҫӗ. Налогсене срокра тӳлеме кирли ҫинчен, государствӑна тивӗҫлӗ кашни парӑма вӑхӑтра тӳлени ҫӗнтерӳ кунне ҫывхартма пулӑшни ҫинчен халӑха тӗплӗн ӑнлантарса параҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ малта пыракан районсенчи колхозниксем государство умӗнчи хӑйсен укҫа-тенкӗ парӑмӗсене пӗтӗмпех вӑхӑтра тӳлесе тӑраҫҫӗ.

Анчах укҫа-тенкӗ пухас ӗҫ республикӑри пур районсенче те пӗр пек тикӗс пымасть-ха. Пӑрачкав, Хӗрлӗ Чутай, Чкаловски, Ҫӗмӗрле, Первомайски, Канаш, Йӗпреҫ, Шӑмӑршӑ тата Кувакино районӗсенче налог парӑмӗсем пысӑкланса кайнӑ. Ҫак районсенчи ӗҫсыннисем укҫа-тенкӗ енӗпе ҫӗршыв умӗнче парӑмлӑ пулнишӗн малтанах унти финанс отделӗсен заведующийӗсем ответлӑ. Мӗншӗн тесен вӗсем хӑйсен налог агенчӗсемпе инспекторӗсен ӗҫне тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ, начар ӗҫлекен агентсемпе инспекторсем тӗлӗшпе кирлӗ пек мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ.

Ҫакна ӑнланса илес пулать: укҫа-тенкӗ пухас ӗҫри ответлӑха ҫухатнӑ агент е инспектор налог парӑмӗсене ӳсе пыма хӑй пулӑшать. Финанс органӗсенчи хӑйсен вырӑнӗсенче тивӗҫлипе ӗҫлемен работниксемпе текех килӗштерсе пурӑнмалла мар, ун пеккисене кирлӗ пулӑшу парса е законлӑ мерӑсем йышӑнса ӗҫлеме вӗрентмелле.

Налог парӑмӗ пурри—финанс работникӗсемшӗн намӑсла япала, парӑма кӗнӗ ҫын—ҫав намӑса йӑтса ҫӳрекенни. Государство умӗнче укҫа-тенкӗ енӗпе парӑмлӑ ҫын фронта пулӑшассинчен аякра тӑрать, ҫӗнтерӳ тума ҫителӗклӗ таран пулӑшмасть.

Налог парӑмӗсене пӗтӗмпех пӗтерес тесен кашни парӑмлӑ ҫынна уйрӑммӑн пӗлсе тӑрас пулать. Унӑн хуҫалӑхӗпе пурлӑхӗ мӗнлине тӗрӗслесе тухас пулать. Налога тӗрӗс хунӑ пулсан, тӳлесе татма вӑй ҫитет пулсан, анчах ҫав ҫынсем ҫапах та тӳлемесӗр тӑраҫҫӗ пулсан, ун пек ҫынсен хуҫалӑхӗсем тӗлӗшпе законлӑ мерӑсем йышӑнмалла, парӑмсене суд урлӑ та шыраса илмелле.

Уйрӑмах ҫар ҫыннисен, Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсен ҫемьисемпе хуҫалӑхӗсене тӗплӗн тӗрӗслесе тухмалла, вӗсене закон тӑрӑх пама тивӗҫлӗ ҫӑмӑллӑхсене памалла. Налог тӗрӗс мар хуни пирки панӑ жалобӑсене ҫийӗнчех пӑхса тухса, ыйтӑва тӗплӗн татса памалла. Жалобӑсене пӑхса тухмасӑр вырттармалла мар. Кашни районри, хулари финанс работникӗсен ҫак ӗҫсене халех туса ирттермелле.

Республикӑри финанс работникӗсен, Хӗрлӗ Ҫар уявӗ умӗн хӑйсен ӗҫне татах та вӑйлатса, налог парӑмӗсене ҫывӑх вӑхӑтрах тата пӗтӗмпех пухса ҫитермелле. Партипе совет организацийӗсен финанс работникӗсене ҫак ӗҫре кирлӗ пек пулӑшса пымалла.

И. ЗОЛОТНИКОВ.
Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗ.

ЛИТЕРАТУРА ХРЕСТОМАТИЙӖСЕНЕ ТЕПРЕНЕХ ҪӖНЕТЕҪҪӖ

Темиҫе кун каялла ЧАССР Наркомпросӗ вӑтам шкулсенче вӗренмелли тӑван литература программисене ҫӗнӗрен пӑхса тухма организациленӗ комиссин ларӑвӗ пулса иртрӗ. Комисси 7—10-мӗш классен программисене пӑхса тухрӗ те, вӗсене тепренех ҫӗнетме йышӑнчӗ. Халь ҫав комиссин йышӑнӑвӗ тӑрӑх, Чӑвашгосиздат литература хрестоматийӗсене улӑштарса ҫӗнетме тытӑннӑ. Хӑшпӗр авторсене хрестоматисенчен кӑларӗҫҫӗ, вӗсен вырӑнне юлашки ҫулсенче паха произведенисем ҫырнӑ авторсем кӗрӗҫҫӗ. Хрестоматисенче Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ тапхӑрне кӑтартакан произведенисем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Сӑмахран Уйӑп Мишшин «Салтак амӑшӗ», А. Эсхелӗн «Амӑрткайӑк» поэмисем Л. Агаковпа Чалдунӑн ҫӗнӗ калавӗсем Ухсайӑн, Хузангайӑн, Эльгерӗн ҫӗнӗ сӑввисем т. ыт. те.

Сталинград чĕрĕлсе ура çине тăрать

Хĕрлĕ Çар Берлин патнелле çĕнтерӳллĕн тапăнса пынă кунсенче мĕнпур малта пыракан этемлĕх совет халăхĕ вырăссен аслă юханшывĕ хĕрринче тунă тĕлĕнмелле паттăр ĕçе пĕтĕм чун-чĕререн аса илет. Атăл çыранĕсем çинче артиллери кĕрлевĕ хăпланни икĕ çул çитрĕ ĕнтĕ, анчах Сталинградăн чапĕ вăрçăн йывăр çулĕ тăрăх хамăрăн воинсемпе пĕрлех утать.

Çапăçу хирĕ Сталинградран питĕ инçете куçса кайрĕ. Халĕ совет çыннисем кунта хăйсен пултаруллă ĕçĕпе çĕнĕ эпопея — аслă хулана чĕртсе ура çине тăратас эпопейăна çыраççĕ. Сталинград çыннисене хăйсен хулине юсама тытăнма çăмăл пулман. Нимĕç варварĕсем, хăйсен çиллине шăнараймасăр, Атăл çинчи паттăр хулана çав тери тискеррĕн ишĕлтерсе пĕтернĕ. Икĕ çул каярах çĕр çинчен сăтăрса пăрахнă хулана нумайĕшĕсем чĕртме çук тесе, ăна ишĕлчĕкпе кĕл ăшĕнчен тепĕр хут çĕклесе ура çине тăратма çук тесе шутланă. Анчах совет халăхĕ, большевиксен партийĕ тата Сталин юлташ хавхалантарса пынипе, мĕнпур тата кирек мĕнле чăрмавсемпе йывăрлăхсене те çĕнтерме пултарать.

Совет влаçĕн çулĕсенче пĕтĕм ĕççыннисем геройла тăрăшнипе Сталинграда хăватлă совет индустрийĕн хули туса хунăччĕ. Кунта техникăн юлашки çитĕнĕвĕсем тăрăх тракторсем тăвакан улăпла завод, судносем тăвакан завод тата ытти тĕрлĕ нумай предприятисем ӳссе çитнĕччĕ. «Красный Октябрь», «Баррикады» ятлă ватă заводсем, вĕсене çĕнетсе йĕркеленĕ хыççăн, çĕршывăн хăватлă предприятийĕсен ретне тăчĕç. Сталинград Тăван çĕршыва гусеницăллă тракторсем, çав тери паха хурçă, судносем, медицина аппаратури, çăмăл промышленноçăн нумай тĕрлĕ изделийĕсем, консервăсем парса тăратчĕ. Хулан чапне музейсем, шкулсем, театрсем, тĕлĕнмелле чаплă садсем татах та ытларах ӳстеретчĕç. Кунта 4 аслă шкул, наукăпа тĕпчев институчĕсем, техникумсем, 13 больница, çĕр шкул ытла ĕçлетчĕç, çав шкулсенче 70 пине яхăн ача вĕреннĕ.

1942 çулхи çулла гитлерла командовани, наступлени пуçласа ярса, Атăл патне çĕмĕрсе тухма хăтланнă, çапла вара вăл Мускава аякран кайса çавăрса илме ĕмĕтленнĕ. Анчах тăшман хăйĕн çав авантюристла ĕмĕтне пурнăçа кĕртме пултараймарĕ. Унăн урнă кĕтĕвĕсем пыракан çул çине Сталинград тухса тăчĕ.

Сталин генийĕ шухăшласа хатĕрленĕ историллĕ çапăçура Хĕрлĕ Çар нимĕçсен 300 пин çынлă суйласа илнĕ чи лайăх çарне аркатса тăкрĕ, Гитлерăн совет халăхне çуралантармалли мĕнпур планĕсене путлантарса лартрĕ. Сталинград нимĕç çарĕ пуçĕпех пĕтсе ларассин пуçламĕшĕ пулса тăчĕ.

Çав тери аслă çапăçу вĕçленнĕ хыççăн тепĕр кунех герой хулана чĕртсе ура çине тăратас ĕç пуçланчĕ.

1943 çулхи çуркунне Сталинграда çамрăк рабочисен малтанхи ушкăнĕсем пыра пуçларĕç. Вĕсем çĕршыв янă çынсем, комсомол янă çынсем пулчĕç. Сталинграда хӳтĕлес ĕçĕн ветеранĕсем, çамрăксене кĕтсе илсе, çапла калатчĕç: «Пирĕн хулара пурнăç та, ĕç те йывăр пулать. Сталинграда чĕртсе ура çине тăратма хĕн пулать. Анчах унăн кашни çуртне, кашни цехне хӳтĕлесе хăварма та пирĕн боецсемшĕн çăмăл пулман. Вĕсем хавшаса ӳкмен, вĕсем, пĕр утăм каялла чакмасăр, çирĕп тăнă, çапла вара хула тăшмана çĕнтерне. Çавна аса илсен, эпир, тылра ĕçлекенсем, йывăрлăхсенчен харама пултаратпăр-и-ха ĕнтĕ!», тетчĕç. Çынсем вара, хулана хăвăртрах чĕртсе ура çине тăратас тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тытăнчĕç. Малтанхи уйăхсенче заводсене юсаса йĕркеленипе пĕрлех пурăнмалли çуртсемпе столовăйсем, мунчасемпе культура вучахĕсем тума лекетчĕ.

Сталинград çыннисене пулăшма пĕтĕм çĕршыв хутшăнчĕ. Мускавпа Ленинградран, Иванововăран, Саратовпа Куйбышевран, Уралпа инçетри Çĕпĕртен, Узбекистанпа Таджикистанран,—Тăван çĕршывăн мĕнпур енĕсенчен Атăл çинчи хула патне строительство материалĕсемпе оборудовани тиенĕ эшелонсем туртăнаççĕ.

Тăван çĕршыва юратнин, тăшман хаярлăхне курайманнин пĕтĕм вăйне Сталинград çыннисем хăйсен герой-хулине чĕртсе ура çине тăратас ĕçе хываççĕ. Вĕсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, хулана гитлерла ирсĕрсем кӳнĕ йывăр суранĕсене хăвăрт сиплесе сыватаççĕ. Сталинград патĕнче нимĕçсен йытă кĕтĕвĕсене пĕтерсе тăкнă хыççăн виçĕмĕш кунĕнче чугун çул узелĕнче пурнăç пуçланчĕ. Юсанă çулсем тăрăх поездсем кăнтăралла, çурçĕрелле туха-туха кайрĕç. Сталинградри электростанцие юсаса ĕçе яма çав тери нумай вăй кирлĕ пулчĕ. Нимĕçсем ун çине 500 ытла бомба пăрахнă, 900 ытла снаряд кăларса янă пулнă.

1943 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнче Сталинградри трактор заводĕнче пĕрремĕш свердильнăй станока ĕçе янă, апрелĕн 18-мĕшĕнче пĕрремĕш токарнăй станока ĕçе янă, июнĕн 12-мĕшĕнче вара Сталинградран трактор заводĕн коллективĕ юсанă танксен пĕрремĕш эшелонĕ фронта тухса кайнă. Халĕ ĕнтĕ çак заводăн конвейерĕ çинчен куллен çĕнĕрен-çĕнĕ гусеничнăй тракторсем анаççĕ. Сталинградри трактор заводĕ çĕршыври ĕçлекен предприятисен йышне çĕнĕрен кĕчĕ.

«Красный Октябрь» ятлă металлурги заводăн корпусĕсем ӳссе çитĕнсе пыраççĕ. 1943 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнче кунта пĕрремĕш мартен кăмакине ĕçе янă, халĕ ĕнтĕ 8 мартен кăмакинче питĕ паха хурçă шăрататтăççĕ. Прокат тумалли хăватлă стан-блюминг строя кĕчĕ. «Красный Октябрь» заводăн коллективĕ хăйĕн продукцийĕпе фронт валли парса тăрать. Нимĕçсем Красноктябрьски района хăйсен тĕп вăйĕсемпе пырса çапнă пулнă. Унти поселока снарядсемпе вут-кăвар пĕтĕмпех шăлса пăрахнă. Халĕ ĕнтĕ кунта çĕнĕрен завод цехĕсем, пурăнмалли çурт-йĕрсем, шкулпа кино-театр, больницăпа столовăй çурчĕсем туса лартнă.

Сталинградра хулари тата хуласем хушшинчи телефон станцийĕ, водопроводăн малтанхи черечĕ, çăкăр пĕçерекен завод, мунча, больницăсем, ача-пăча учрежденийĕсем, пысăк мар предприятисем вунăшарăн ĕçлеççĕ, вĕсем ĕççыннисен нушисене тивĕçтереççĕ. Атăл çинчи порта юсаса ĕçе янă. Икĕ çул хушшинче производство лаптăкĕсене çур миллион тăваткăл метр ытла ĕçе янă, юсанă предприятисем çийĕнчех хулана малалла юсас ĕçе хутшăнаççĕ.

Сталинградра производство пурнăçĕ кăна мар, культурăллă пурнăç та чĕрĕлсе, вĕресе тăрать. Библиотекăсем, кино-театрсем Горький ячĕпе тăракан театр ĕçлеççĕ. Медицина тата механика институчĕсем ĕçлеме тытăнчĕç. 55 шкулта темиçе вунăшар пин ача вĕренет.

Пурăнмалли çуртйĕрсем тăвас ĕç анлă фронтпа сарăлса пырать. Паянхи кун тĕлне пурăнмалли çуртйĕрсен лаптăкне 450 пин тăваткăл метр ытла туса çитернĕ (вăрçăчен 2 миллион тăваткăл метра яхăн пулнă), уйрăм çынсен 12 пин çуртне тата нумай тĕрлĕ коммуналлă çуртсене юсаса йĕркеленĕ. Сталинградра пурăнакан 150 пин çынна яхăн, пуринчен малтан фронтовиксен çемьисене, подвалсемпе блиндажсенчен лайăх хваттерсене куçарнă. Хулара садсем çĕнĕрен чĕрĕлеççĕ. 1944 çулта 65 пин йывăç ытла лартнă.

Сталинградра вунăшар пин строитель ĕçлет. Анчах хулана юсаса йĕркелес ĕçе строительсем кăна мар, мĕнпур хула халăхĕ хутшăнать. Хулара пурнăç çĕнĕрен чĕрĕлме пуçланă малтанхи кунсенчех кунта патриотла çĕнĕ чаплă юхăм пуçланчĕ. Ăна Черкасова юхăмĕ тесе ят пачĕç. Фронтовик арăмĕ Александра Черкасова, «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн» медальпе наградăланăскер, çакăн пек сĕнӳ панă: кашни Сталинград çыннин хулана юсанă çĕре куллен ĕçрен пушаннă хыççăн 2—3-шер сехет тухса ĕçлемелле. Черкасова, ача-пăча учрежденийĕсенче ĕçлекен хĕрарăмсене пухса, бригада тунă та; «Павлов çурчĕ» текен чаплă çурта юсанă çĕрте ĕçленĕ. Сталинграда хӳтĕленĕ кунсенче Павлов сержант, геройсен пысăк мар ушкăнĕпе пĕрле, çав çурта нимĕçсенчен икĕ уйăх хушши хӳтĕлесе тăнă.

Черкасова юлташăн патриотла пуçарăвне Сталинград çыннисем хавасланса кĕтсе илчĕç. Пур çĕрте те доброволец-строительсен бригадисене тума тытăнчĕç. Çав бригадăсен вăйĕпе вунăшар çурта юсаса йĕркеленĕ. Халĕ çав çуртсенче шкулсем, больницăсем тата фронтовиксен çемьисем вырнаçнă. Çапла, Сăмахран, Тракторозаводски районри 159-мĕш бригада стадиона, вуламалли çурта, ФЗО-ра вĕренекенсем валли общежити çуртне тата пурăнмалли темиçе çурта юсанă. Медицина институтĕнчи профессорсемпе преподавательсем тата студентсем общежити çуртне юсанă, вĕренӳ çурчĕн корпусне тунă çĕрте нумай ĕçленĕ. Ворошиловски районра фронтовиксен çемьисем валли уйрăм çуртсем 100 ытла тунă. Черкасовла бригадăсем нумай предприятисене юсаса йĕркеленĕ çĕрте пысăк пулăшу параççĕ. Çав ĕçсене пурне те, тĕп ĕçрен пушансан, каннă сехетсемпе кунсенче тăваççĕ. Сталинградра халĕ доброволец-строительсен йышĕ 20 пин çын ытла шутланать. Хĕллехи вăхăтра вĕсем строительство профессийĕсене вĕреннĕ, çулла вара татах та тухăçлăрах ĕçлеме тытăннă.

Хулан сăн-сăпачĕ, уйрăмăнах заводсен районĕнчи сăн-сăпат, хăвăрт улшăнса пырать. Çав районсенче производство пурнăçĕ хĕрӳллĕн вĕресе тăрать. Историллĕ çапăçусем пулса иртнĕ вырăнсенче халĕ мĕн пулса пыни хулана юсаса йĕркелемелли пысăк ĕçĕн пуçламĕшĕ кăна-ха. Сталинградра тумалли питех те нумай. Хулан вăтаçĕрти районĕнче юсав ĕçĕсем пуçланманпа пĕрех, унта генеральнăй план тăрăх пĕр ансамбле пăхăнса тăракан çĕнĕ, илемлĕ çуртсем туса лартмалла.

Вырăс çынни хăйĕн Тăван çĕршывне хĕрӳллĕн юратать, чĕрĕк ĕмĕр хушшинче Тăван çĕршывăн чысĕшĕпе никама парăнманлăхĕшĕн пыракан геройла кĕрешӳре хăйне икĕ хутчен чаплă кăтартнă хулана совет çыннисем пĕтĕм чун-чĕререн юратаççĕ. Ывăнма-канма пĕлмесĕр, халиччен пулман çав тери пысăк йывăрлăхсене тӳсе ирттерсе, Сталинград çыннисем, парти организацийĕ ертсе пынипе, хăйсен пĕтĕм вăйне Атăл çинчи крепоçа чĕртсе ура çине тăратнă çĕре параççĕ. Хĕрлĕ Çарĕн аслă çĕнтерĕвĕсем Сталинград ĕççыннийĕсене çĕнĕрен-çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ. Сталинград çыннисем, хăйсен тăван хулине хăвăртрах чĕртсе ура çине тăратас тесе, фронта вăйлăнрах та вăйлăнрах пулăшса тăрас тесе, çапла вара тăшмана татăклăн та пуçĕпех çапса аркатас сехете çывхартас тесе, пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Герой-хула — халиччен нихăçан пулман çирĕплĕхпе паттăрлăхăн палли—Сталинград чĕрĕлсе ура çине тăрать. Вăл пирĕн аслă та хăватлă Тăван çĕршывăн чи илемлĕ хулисенчен пĕри пулĕ.

М. ВОЛОЛАГИН,
ВКП(б) Сталинград Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Комсомолăн районри конференцийĕ

СЕНТЕР. Çак кунсенче комсомолăн районри XII-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕсем çинчен С. Давыдова юлташăн отчетлă докладне итлесе, сӳтсе-яврĕ.

Отчетлă тапхăрта комсомолăн районри организацийĕ чылай çитĕнӳсем тунă. Иртнĕ çулхи çуракинче 141 комсомолец, тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра 200 комсомолец хирте ĕçленĕ. Государствăна тырă парас ĕçе пĕтĕмĕшпе пекех комсомолецсемпе ялти çамрăксен вăйĕпе пурнăçланă. Комсомолецсемпе çамрăксем 4 хутчен воскресник ирттерсе, государствăна 5560 центнер тырă леçсе панă.

Ялхуçалăх ĕçĕсене анăçлăн ирттерес тĕлĕшпе уйрăмăнах «Колос», «Новый путь», «Хлебороб», «Хĕрлĕ паттăр» колхозсенчи комсомолецсем лайăх ĕçленĕ. Вăл колхозсенчи комсомолецсем 1944 çулхи тырпулсене анăçлăн пухса кĕртнĕ хыççăнах 1945 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме тытăннă.

«Колос» колхозра комсомолецсемпе çамрăксем уя 1700 лав ытла тислĕк кăларнă, 35 центнер кĕл тата 60 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Комсомолецсем 5 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Унта халь вăкăрсемпе тислĕк кăлараççĕ, улăм турттараççĕ.

Комсомол организацин ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар. Уйрăмăнах çамрăксене комсомол ретне илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Отчетлă тапхăрта мĕн пурĕ те 198 çамрăка çеç комсомола илнĕ. «КИМ», «Аврора», «Красный маяк» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче иртнĕ çулта комсомола пĕр çамрăка та илмен. 90 колхозран 38 колхозра комсомол организацисем çук. Сахал йышлă организацисем 37 шутланаççĕ.

Конференци ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн Чăваш республикинчи организацийĕсен ĕçĕсем çинчен йышăннă постановленине районра çителĕксĕр пурнăçласа пынине палăртрĕ. Комсомолецсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Комсомолецсен дисциплини начар. Юлашки вăхăтра ВЛКСМ райкомĕн пленум членĕсем те дисциплинăна пăсни палăрать. Январĕн 24-мĕшĕнче ВЛКСМ райкомĕн пленумĕ членсем пухăнман пирки пулайман.

Конференци ВЛКСМ райкомĕн ĕçне хытă критиклерĕ. Пренире тухса калаçакансем çарпа физкультура, агитацине пропаганда ĕçĕсем, культмассăллă ĕç çителĕксĕр пулса пынине, шкул енĕпе ĕçлекен комиссин начар ĕçленине палăртрĕç.

Конференцире ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Я. Петров, ВЛКСМ Обкомĕн представителĕ Алексеев юлташсем тухса каларĕç.

Конференци ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме сĕнӳсем пачĕ, умра тăракан задачăсене палăртса решени йышăнчĕ тата ВЛКСМ райкомĕн çĕнĕ составне суйласа хăварчĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Клуб питĕрĕнсе тăрать

ИШЛЕЙ. Чăптăр ялсоветĕнчи «Волгарь» колхозра ятарласа лартнă кĕрнеклĕ çурт пур. Районри çутĕç пайĕнчи работниксем çав çурта клуб шутне кĕртнĕ. Чăптăр ялсоветĕнче ĕçлекенсем вара çав клуб ячĕпе тĕрлĕрен хаçат-журналсем илсе тăраççĕ. Клуб мĕн хĕле кĕнĕренпех хупă тăрать. Унта çуллахи вăхăтра «Волгарь» колхоз правленийĕ ĕçленĕ. Халĕ вăл, çурхи кайăк пек, ăшă шыраса, пĕчĕк пӳрте куçнă.

Ялта коммунистсем, комсомол организацийĕ, агитколлектив та пур. Вĕсем пĕри те культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелессишĕн тăрăшмаççĕ. Колхозсенче пухусем икĕ-виçĕ уйăх хушши ытла пулмаççĕ, колхозниксене тĕнчери лару-тăру çинчен тата хамăр çĕршыври паллă хыпарсене пĕлтерекен çук. Хăçанччен çавăн пек пулĕ-ши?

С. СЕМКОВ.

Вăрман хатĕрлемелли плана Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне тултарма пулаççĕ

ПИНЕР, февралĕн 1-мĕшĕ (Хамăр корр.). Кунта Калинино районĕнчи колхозсемпе ялсовет председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлесе турттармалли плана тултарса çитерес тĕлĕшпе ирттекен фронтовой уйăхлăхри задачăсем çинчен сӳтсе-яврĕç. Уйăхлăх ирттересси пирки ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă решени çинчен ВКП(б) райком секретарĕ Кудряшов юлташ каласа пачĕ. Вăл районри колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче мĕнле ĕçлени çинчен тĕплĕн каларĕ.

Колхоз председателĕсем вăрман хатĕрлесе турттармалли плана срокчен тултарма пулчĕç, вăрман хатĕрлес ĕçе хăвăртлатмалли майсене кăтартса пачĕç. Канашлу вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе малта пыракан Сĕнтĕрвăрри, Çурачăк, Шăхасан районĕсенчи колхозсен пуçарăвне йышăнса, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлесе турттармалли плана, Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне — февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех тултарса çитерме йышăнчĕ.

Çак обязательствăна анăçлăн пурнăçа кĕртме колхозсем ĕçпе тур[illegible] вăйĕ кирлĕ таранах уйăрса параççĕ. Вăрманта ĕçлекенсене ертсе пыма колхоз активĕнчен ответлă çынсем уйăрса яраççĕ.

ВУТĂ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА КАШНИ КОЛХОЗĂН ТУЛТАРМАЛЛА

ЧКАЛОВСКОЕ. Халĕ чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлессин хĕрӳллĕ тапхăрĕ иртсе пырать. Çак иртнĕ вăхăтра тăрăшса ĕçлесе, чылай колхозсем тăваттăмĕш квартал планне ытлашшипех тултарчĕç. Сăмахран, Чкалов ячĕпе тăракан колхоз плана 113 процент, «Победа» колхоз 172 процент тата «Гвардеец», Киров ячĕпе тăракан колхозсем 120—125-шер процент тултарчĕç. Ку колхозсем чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçре пĕр-пĕрине ăмăртса ĕçлеççĕ. Вăрманта ĕçлекен колхозниксене ертсе пыма ятарласа уполномоченнăйсем уйăрнă. Уполномоченнăйсем колхозниксен ĕçне тĕрĕс йĕркелеме пулăшаççĕ.

Çав вăхăтрах районра чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçре юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Хитров юлташ) 4-мĕш квартал планне 15 процент, «Путь Ленина» колхоз (председателĕ Горшков юлташ) 22 процент çеç тултарнă. Çак колхозсен руководителĕсем тата унти ял Совечĕсен председателĕсем чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе ответлăха туймаççĕ.

Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесси пысăк ĕç пулса тăрать. Çавăнпа çак ĕçе срокра тата ытлашшипех пурнăçласа пымалла.

М. КОШКИН.

Çуракине хатĕрленеççĕ

СЕНТЕР. (Телефонпа). Районри нумай колхозсенче уя тислĕк кăларас ĕç лайăх пырать. Колхозсем пурĕ 54.000 лав тислĕк, 460 лав торф уя кăларнă, 985 центнер кĕл, 575 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Уйăхлăх вăхăтĕнче уйрăмăнах Чкалов ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Леонтьева) аван ĕçлерĕç. Кунта хире пĕтĕмпе 1500 лав тислĕк кăларнă, 22 центнер кĕл, 8 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Киров ячĕпе тăракан колхозра та (председателĕ Иванов) уйăхлăхра çине тăрса ĕçлерĕç. Уя 1200 лав тислĕк турттарнă, вăл планпа пăхнинчен 200 лав ытларах пулать. 144 центнер кĕл, 29 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Çак колхозра кĕле урама е сырмана тăкас йăла пĕтнĕ.

«Правда», «Новый путь», Войков ячĕпе тăракан колхозсенче те вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕç анăçлă пырать.

Çав вăхăтрах «Ленинский путь» (председателĕ Борисов), «Красный богатырь» (председателĕ Данилов), 1905 çул ячĕпе тăракан (председателĕ Артемьев), Калинин ячĕпе тăракан колхозсем вырăнти удобренисем пухас тĕлĕшпе питĕ япăх ĕçлеççĕ.

Г. МОИСЕЕВ.

Нимерен нимене çӳрекенсем

Йĕпреç районĕнчи уйрăм колхозсенче нимесем тума юратаççĕ. «Октябрь» колхозра кĕçал кĕске вăхăтрах 12 ниме тунă. Ниме тесен колхоз председателĕ Ассанов юлташ пĕр лашана та чарса тăмасть: хуть те мĕн чухлĕ çӳре, хуть те тем турттар. Вăл вара çуракине хатĕрленессине те, вырăнти удобренисем пухмалли уйăхлăха та пĕтĕмпех манса каять. Анчах та Ассанов юлташ ниме тунă колхозник патĕнче счетоводчĕпе пĕрлех виçшер кун хăналанма манмасть. Колхозра лайăх пĕлеççĕ: нимесĕр Ассановран лаша илме çук.

«Октябрь» колхоз председателĕнчен «Оборона» колхоз председателĕ Анисимов çумай мала иртсе кайнă. Каллех ĕçлес енĕпе мар, нимесем тунипе. Хĕле кĕнĕренпе кунта 20 яхăн ниме тунă. Çак ниме ĕçкисенчен колхоз председателĕ Анисимов юлташ пĕринчен те юлман.

«Оборона» колхозра лашасемпе тĕрĕс усă курмаççĕ, выльăх апатне типтерлĕ тыткаламаççĕ. Çакăн пирки Анисимова сахал мар асăрхаттарнă. Ун çинчен пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Пудовкина юлташ та лайăх пĕлет. Лашасемпе йĕркеллĕ усă курассишĕн, уйăхлăха кирлĕ пек хутшăнассишĕн кĕрешес вырăнне, Пудовкина хăй те ниме тума шутланă. Ун патĕнче татах вара Анисимов тул çутăличчен ниме ĕçки ĕçсе ташланă.

Çак пуçлăхсен пуç миминче пĕр ниме шухăш кăна. Хăçан çуракине хатĕрленес шухăш пырса çапăнĕ-ши?

П. КУРАКОВ.

Союз Совечĕн Председателĕпе А. А. Андреевпа Национальноçсен Совечĕн Председателĕ Н. М. Шверник патĕнче пулса иртнĕ апатлану

Февралĕн 1-мĕшĕнче Союз Совечĕн Председателĕпе А. А. Андреевпа Национальноçсен Совечĕн Председателĕ Н. М. Шверник патĕнче Англи парламенчĕн делегацийĕ ячĕпе апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: В. Эллиот—делегаци пуçлăхĕ, Ч. Понсонби, М. Баллер, Д. Паркер, Томас Фрезер, лорд Фарингтон, У. Робертс, П. В. Джеусон, С. Кинг-Холл господинсем тата Британи Посольствин представителĕсем. Советсенчен апатланура çаксем пулнă: А. И. Микоян, А. И. Шахурин, В. А. Малышев, В. Г. Деканозов, С. А. Лозовский, А. Ф. Горкин, В. А. Сергеев, И. П. Вардин, генерал-полковник Ф. И. Голиков, Г. М. Попов, И. А. Власов, Т. Д. Лысенко, В. А. Веснин, М. В. Сарычева, В. М. Образцов, М. Э. Чиаурели тата СССР Верховный Совечĕн икĕ палатин ытти депутачĕсем, çавăн пекех тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн ответлă сотрудникĕсем те пулнă.

Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи суту-илӳ çинчен калаçса татăлнă

Финляндие апат-çимĕç продукчĕсем тăратасси пирки, Финляндирен стратегиллĕ чĕртавар кӳрсе килесси пирки Финляндипе СССР хушшинче пынă калаçусем 1945 çулхи январĕн 31-мĕшĕнче вĕçленнĕ. ССР Союзĕн Правительствипе Финлянди Правительстви çакăн пирки Килĕшӳ туса алă пуснă.

Вăл Килĕшӳ тăрăх, СССР Финляндие июнĕн 1-мĕшĕччен 30.000 тонна тĕштырă, 1.000 тонна сахăр тата 300 тонна канфет тавраршсем ямалла. Ун вырăнне Финлянди Совет Союзне çак çулта никель, кобальт, кукăрт колчеданĕ тата тĕрлĕ хĕçпăшалсем памалла. Çавăн пекех Совет Союзĕн тинĕс-çар карапĕсене Финлянди верфĕсенче юсамалла.

Совет Союзĕн Правительстви хушнипе Килĕшӳ çине Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссарĕ А. И. Микоян юлташ, Финлянди Правительстви хушнипе—Суту-илӳпе Промышленность Министрĕ Гартц господин тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Свенто господин алă пуснă. (ТАСС).

Совет наукипе искусствин деятелĕсене Хельсинки хулинче йышăнни

ХЕЛЬСИНКИ. февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 29-мĕшĕнче финсен çутĕç министрĕ Такки совет наукипе искусствин представителĕсен ячĕпе йышăну туса иртернĕ. Йышăнура ВОКС председателĕ Александров профессор, Пудовкин кинорежиссер, Леонов писатель, Малиновский профессор, Куприянов, Крылов тата Соколов (Кукрыниксы) художниксем, Ковалевский композитор пулнă. Йышăнура çавăн пекех Энкель, Пеккала, Кекконен, Лейно, Хело министрсем, союзниксен Орлов юлташ ертсе пыракан Контроль Комиссийĕн представителĕсем пулнă, çав кунах финн писателĕсем, художникĕсем тата кино деятелĕсем апатлану тунă. Апатланура тухса каланă сăмахсенче икĕ çĕршыв хушшинчи культурăллă çыхăнусене вăйлатма кирлине палăртнă.

СССР ХАЛАХĔ ВАРШАВАНА ТАВАНЛА ПУЛАШНИ ÇИНЧЕН ПОЛЬША ПИЧЕЧĔ МĔН ÇЫРАТЬ

ЛЮБЛИН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Вырăс, украинец, белорус тата литовец халăхĕсем геройла Варшава хулине 60.000 тонна тырă пани çинчен Польша хаçачĕсем нумай çыраççĕ. Польша халăхне çапла пулăшнине Польша хаçачĕсем Польшăпа совет халăхĕн туслăхне палăртакан япала тесе шутлаççĕ.

«Речь Посполита» хаçат умстатьяра çапла çырать: «Хĕрлĕ Çар çиçĕмле наступлени туса пыни пирĕн хуласене çăлса хăварать. Çавна пула нимĕçсем пирĕн хуласене аркатса тăкма ĕлкĕреймеççĕ. Хĕрлĕ Çар командованийĕн стратегиллĕ планĕсене эпир ырлатпăр, мĕншĕн тесен вăл пире хамăр пурлăха упраса хăварма пулăшать. Варшава хулине аркатнă. Гитлер вăл хулана пушхир туса хума хушнă. Пирĕн столицăна аркатса тăкнă ирсĕр алăсене, çавăн пекех тата тискер ĕçсем тунă Бур Комаровскипе эмиграции шайкăна истори таврĕ. Çапах та аркатса тăкнă Варшава пурăнма пуçлать. Хулана çынсем таврăнаççĕ, государство аппарачĕ ĕçлеме тытăнать. Хулана ура çине тăратасси пысăк хăвăртлăхсемпе пулса пырас пирки никам та иккĕленмест. Хĕвелтухăç енчи кӳршĕсем пире чи малтан пулăшрĕç, вĕсем пирĕн аркатнă тата юн айне пулнă столицăна анлăн пулăшрĕç. Варшава халăхĕ валли гитлеровецсем, Прушкуври лагерь пек концентрациллĕ лагерьсем туса, бомбăсемпе пульăсем парса «тăрантарнă». Пирĕн туссем, пирĕн союзниксем—çăкăр, çу, сахăр тата ытти япаласем те парса пулăшаççĕ». «Чăнчăн тус,—çырать «Глос люду» хаçат,—инкекре палăрать. Çапла калать халăх. Гитлеровецсем оккупациленĕ вăхăтра Польша халăхĕ çакна пĕлсе çитрĕ: пĕртен-пĕр шанчăклă тус, пĕртен-пĕр шанчăклă союзник—социализмлă вăйлă государство, Польшăн хĕвелтухăçĕнчи кӳрши Совет Союзĕ пулса тăрать. Йывăр сехетре çав анчах пире пулăшма пултарать».

ТИТО МАРШАЛПА ОСУБКА-МОРАВСКИЙ ПĔР-ПĔРИН ПАТНЕ ЯНĂ ТЕЛЕГРАММĂСЕМ

ЛЮБЛИН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Варшава хулине ирĕке кăларнă пирки Тито маршал Польшăн Вăхăтлăх Правительствин Премьер-министрĕ Осубка-Моравский патне телеграмма янă. Телеграммăра çапла каланă: Польша халăхне тата Сире Польша столицине нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнипе саламлатăп. Сирĕн çĕршыва нимĕç оккупанчĕсенчен пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларассине Югослави халăхĕ савăнса кĕтсе тăрать.

Çак телеграммăна ответлесе, Премьер-министр Осубка-Моравский çапла çырнă: Хĕрлĕ Çар пирĕн нумай асап курнă столицăна Варшава хулине ирĕке кăларнă ятпа ырă сунса саламланăшăн Польша халăхĕ ячĕпе эпĕ Сире тав тăватăп. Югослави паттăр халăхĕ Эсир ертсе пынипе кĕрешнине Польша халăхĕ савăнса сăнаса тăрать. Çывăхри вăхăтрах Югославие нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăлармалла пултăр тесе пĕтĕм чĕререн сунатăп.

ВЕНГРИН ВАХАТЛАХ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ХАЛАХА ВЕНГРИН ÇĔНĔРЕН ТАВАКАН ÇАРНЕ КĔМЕ ЧĔНЕТ

ДЕБРЕЦЕН, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрин Вăхăтлăх Правительствин премьер-министрĕ Миклош Бела тата çар министрĕ Вереш Янош генерал-полковник çĕршыври халăха Венгрин çĕнĕрен тăвакан çарне ирĕклĕн кĕме чĕннĕ.

«Халĕ,—тенĕ чĕнӳре, — Венгри халăхĕн чăн-чăн ирĕклĕхĕшĕн пыракан вăрçи пуçланать. Венгрин çĕнĕ çарĕ ирĕклĕхе юратакан халăхсем хушшинче Венгри халăхĕ валли тивĕçлĕ вырăн кĕрешсе илмелле».

ГЕРМАНИРЕ ХАРАСА ӲКНĔ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Германири радио пĕлтернĕ тăрăх, империн гитлерла прокурорĕ распоряжени кăларнă. Çав распоряжени тăрăх, полици ним мандатсăр-мĕнсĕрех ухтарма тата арестлеме пултарать. Çапла туни пораженецсемпе тата хăраса ӳкнĕ çынсемпе кĕрешессине вăйлатма кирлĕ тенĕ распоряженире.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Голландире союзниксен çарĕсем нумай вăхăт хушши питĕ вăйлă çапăçнă хыççăн Гертрейденберг хулинчен кăнтăртарахра Маас шывĕ çинчи Капершевелер утравне тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă. Унтан кăнтăртарахра, Маншау хулинчен çурçĕртерехре, союзниксен çарĕсем наступлени туса пынă. Эйхершейд тата Ингенбройх (Германи) хулисене туртса илнĕ. Моншау хулине Клервэо хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри район хушшинче союзниксем хăшпĕр тĕлте 5.000 ярд таран малалла кайнă. Союзниксен пехоти чаçĕсем, 4.000 ярд малалла куçса, Бельгипе Германи чикки урла каçса кайнă.

Сен-Вит хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Швирбах тата Ломмерсвейлер хулине йышăннă. Штеффесхаузер хулине тăшмантан тасатнă.

Страсбург хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Гамбсхейм хулине тытса илнĕ. Страсбургран кăнтăртарахра союзниксен чаçĕсем Бенфельд хулинчен хĕвелтухăçнерехри районра Рейнпа Рона каналĕ патнелле 4 [illegible] яхăн куснă. Кольмар секторĕн кăнтăр пайĕнче тăшман Серне тата Виттельсхей хулисене ĕлĕкхи пекех питĕ вăйлă хӳтĕлесе тăрать. Икĕ хулинче те хаяр урамсенче хаярран çапăçаççĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш[illegible] вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Италири пĕтĕм фронт тăршшĕпех патруль[illegible] кĕрешнĕ.

ЛАПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВАРÇА

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтернĕ: союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, Америка çарĕсем Гранде (Филиппин) утравĕ çине пырса аннă. Вăл утрав Субик заливне кĕнĕ çĕрте, Лусон утравĕн хĕвеланăç çыранĕ патĕнче ларать. Вăл заливра Америка çарĕсем Японин Олонгапо ятлă тинĕс базине тытса илнĕ. Америка çарĕсем çав гавань йĕркене кĕртес тĕлĕшпе çавăнтах ĕçлеме пуçланă та халĕ унпала усă курма тытăннă та ĕнтĕ.

Лусон утравĕ çинче американецсен 6-мĕш армийĕн чаçĕсем, Манила хули патнелле куçса пырса, Лубао хулине йышăнса илнĕ. Халĕ вĕсем Манила хулинчен 25 миля çурçĕртерехри Калумпит хули патне пырса çитнĕ.

КĔСКЕН

* Лондонра Чеховăн «Дядя Ваня» ятлă пьесине халăх питĕ юратса пăхать.

*Югославие французсен çар миссийĕ тухса кайнă. Вăл миссие авиаци генералĕ Пейронне ертсе пырать.

▲ Рима Рузвельтăн представителĕ Гарри Гопкинс пынă. Рима пыраччен вăл Лондонра тата Парижра пулнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти электромеханика техникумĕ 1-мĕшпе 3-мĕш курссене вĕренме илет, 1-мĕш курса вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене, 3-мĕш курса—вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Техникум çак специальноçсене вĕрентет: 1) электричество аппарачĕсем тăвасси, 2) метала касса ĕçлесси.

Вĕренекенсене общежитие вырнаçтараççĕ, стипенди параççĕ, столовăйра апатлантараççĕ.

Заявленисене мартăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82. Электромеханический техникум.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. [illegible] Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ редакторăн — 0—67, заместителĕн [illegible] парти пурнăç пайĕн 3—97. промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00518. Типография № 1, Управления полиграфпро [illegible] при СНК ЧАССР. Заказ [illegible] тираж 10.000 экз.